Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21 Путь победыОК Путь Победы

Ершепуç территори пайĕ

#регпроекты #нацпроекты

# ПАЯНХИ ЯЛ

Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет

**Ершепуç территори пайне 6 ял кĕрет – Ершепуç, Отиккăвă, Кӳстӳмĕр, Хураçырма, Авруй, Кушлавăш.**

## Ырă улшăнусем курăмлă

**Ялта пурăнакансем хăйсене пăшăрхантаракан ыйтусемпе чи малтанах вырăнти территори пайĕсен администрацине çул тытаççĕ. Шăпах территори пайĕн пуçлăхĕсем тăрăшнипе чылай çивĕч ыйтăва вăхăтра татса пама май килет. Ершепуç ял тăрăхĕнче çак тивĕçе Эрколий Анатольевич Молчанов пурнăçласа пырать. Ку должноçре 2 çул ытларах кăна тимлет пулин те, ял çыннисен шанăçне курăмлă ĕçĕсемпе тӳрре кăларать вăл. Халăх ăна кирек епле ыйтупа та канаш пама пултарнишĕн, ваттипе те, вĕттипе те тарават пулнишĕн хисеплет.**



Э.Молчанов Е.Игнатьева ветерана саламлать.

Эрколий Анатольевич Ершепуç территорийĕнче юлашки çулсенче пурнăçланакан ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ:

– 2023 çул пуçламăшĕ тĕлне территори пайне кĕрекен 6 ялта 870 кил хуçалăхĕнче 1419 çын шутланнă. Ял тăрăхĕнче вăтам шкул, шкул çумĕнчи ача сачĕ, фельдшерпа акушер пункчĕсем, библиотека, культура çурчĕсем пур. Ял халăхĕн пурнăç шайне ӳстересси, ялсен инфраструктурине аталантарасси, вĕсен сăн-сăпатне çĕнетесси, çамрăксене тăван тăрăхра юлма лайăх условисем туса парасси пирĕн ĕçре тĕпре. Ытти çĕрти пекех чи актуаллă ыйтусенчен пĕри вăл – ялсенчи çул-йĕр пахалăхĕ. Йĕпе-сапаллă çанталăкра кашни кил-çурт патне васкавлă медицина пулăшăвĕн е пушар хуралĕн машинисем чăрмавсăрах çитсе вăхăтлă пулăшу кӳни кашни кил хуçалăхĕшĕн пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та «Хăрушсăр тата пахалăхлă çулсем» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн ял тăрăхĕнче çак ĕçсене пурнăçланă: Кӳстӳмĕрти Солнечная урамри çула тĕплĕ юсавра çĕнетнĕ, 350 метр тăршшĕ вак чул сарса тухнă. Хураçырма ялĕнчи Огородная урамра 500 метр, Кушлавăшри Чувашская урамра 150 метр çула та юсаса йĕркене кĕртнĕ. Подрядчиксем – Сергей Флегентов уйрăм предпринимательпе «Ника» организаци – ĕçсене вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçланă. Çак кунсенче Ершепуçĕнчи Первомайская тăкăрлăкри çула вак чул сарса хытарас ĕçсем пуçланнă. Хĕлле «Агрохмель» ООО территори пайне кĕрекен ялсенчи çулсене юртан вăхăтра тасатса тăчĕ. Тĕттĕм вăхăтра урамсене çутăпа тивĕçтерессии те тимлĕхре. Пĕтĕмпе ял тăрăхĕнче кун вăрăмăшне шута илсе ĕçлекен, ятарлă таймерлă 10 шкаф вырнаçнă. Пĕтĕм ĕç çынсене пурăнма хăтлă условисем йĕркелессипе, çул-йĕр хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе çыхăннă, – палăртрĕ Эрколий Анатольевич.

Паллах, тăван тăрăхра илемлĕх, тасалăх хуçалантăр тесен чи малтанах хамăртан пуçламалла. Кашниех хăйĕн кил таврашĕнчи тасамарлăха пуçтарсан, урамсенче вĕлтрен-çумкурăка вăхăтра çулса тирпейлесен пур çĕрте те йĕрке пулĕ. Çакна ăнланаççĕ, яваплăха туяççĕ ял çыннисем. Йышпа пуçтарăнса пурнăçлакан ĕçсем те чылай территори пайĕнче.

Сăваплă вырăнсене тирпейилем кĕртесси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Кашни çулах ял масарĕсене çӳпçапран тасатма Ершепуç тăрăхĕнче пурăнакансем кар тăрса пухăнаççĕ. Çăва çинчи пӳртсене, картасене пăхса-юсасах тăраççĕ. Пуçаруллă бюджет программипе Хураçырма ялĕнче масар çуртне çĕнĕрен хăпартнă. Çăвасенче çӳпçап контейнерĕсем вырнаçтарнă.



Кӳстӳмĕрти Солнечная урамри çĕнĕ çул.

Йышпа ĕçленипе пĕрлех пахалăхлă канни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. «Культура» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн 2022 çулта Отиккăвă ялĕнче халăха пуçтарăнса тĕрлĕрен мероприятисемпе концертсем ирттерме ятарлă вырăн хатĕрленĕ. Ун валли 0,8 га çĕр уйăрнă, çуллахи сцена лартнă. Çывăх вăхăтра çак территорине карта тытса çавăрассипе ĕçсем пуçланмалла.

Ял тăрăхĕнче ЗИЛ -131 пушар машини шутланса тăрать. Водителĕ ирĕклĕ пушар командинчен. Вĕсене тытса тăрассипе çыхăннă тăкаксене пĕрлехи вăйпа, ял халăхĕ хăй ирĕкĕпе пуçтарнă укçа-тенкĕпе саплаштараççĕ. Пушар хăрушсăрлăхне ял территорийĕнче пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Пухусенче яланах çак инкек-синкеке асăрхаттармалли правилăсене аса илтереççĕ, ятарлă памяткăсем валеçеççĕ. Пĕччен пурăнакан ватăсем тата ăнăççăр çемьесем ку енĕпе çирĕп тĕрĕслевре.

– Паллах, пĕтĕм ĕçе халăхпа калаçса, канашласа, вĕсен сĕнĕвĕсене шута илсе пурнăçлама тăрăшатпăр. Пуçаруллă бюджет программине хутшăннă чухне ял халăхĕ хăй пĕлтерĕшлĕ объектсене суйлать, укçа-тенкĕ пухассипе тимлет, – палăртрĕ территори пайĕн пуçлăхĕ.



Б.Семенов: «Хăмла çитĕнтерни ялшăн та лайăх».

Ершепуç тăрăхĕнче «Агрохмель» агрофирмăпа Алексей Фадеев фермер хуçалăхĕсем ӳсĕмлĕ ĕçлесе пыраççĕ. Ял çыннисене ку аякка кайса çӳремесĕрех, тăван тăрăхрах ĕç вырăнĕ тупма май парать.

Алексей Николаевич Фадеев мăйракаллă шултра выльăх ĕрчетессипе 20 çул ытла тимлет. Фермер хуçалăхĕ патшалăх программисене хутшăнса грантсем çĕнсе илнĕ. Пĕрремĕш хут пулăшăва 2012 çулта тивĕçнĕ, ĕнесем туяннă, 25 пуç выльăх вырнаçмалăх вите çĕкленĕ. 2017 çулта патшалăх пулăшăвĕ тата курăмлăрах пулнă: Алексей Фадеевăн хуçалăхĕ 10 миллион тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕ. 2019 çулта Отиккăвăра 100 пуç вырнаçмалăх хăватлă выльăхчĕрлĕх комплексне уçнă. Паянхи кун та фермер хуçалăхĕ ăнăçлă ĕçлесе пырать. Кăçал Алексей Николаевич республикăри чи лайăх 100 фермерсен шутне лекнĕ, рейтингра – 28-мĕш вырăнта.



Кӳстӳмĕр шкулĕн хĕрачасен футбол команди.

Республикăра хăмла лартса ӳстерессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Чăваш ен Пуçлăхĕ Олег Николаев çирĕплетнĕ тăрăх, Расçейре туса илнĕ хăмлан 90 процентне пирĕн республикăра çитĕнтереççĕ. Вăрнарсем те хăмла отраслĕн аталанăвне пысăк тӳпе хываççĕ.

Борис Семенов ертсе пыракан «Агрохмель» хуçалăх ырă ятра. Вăл тырпул, çĕрулми тухăçлă ӳстернипе пĕрлех хăмла туса илессипе те курăмлă ĕçлет. Каламалла, Вăрнар округĕнче хальлĕхе симĕс ылтăна Ершепуç тăрăхĕнчи хуçалăхра кăна çитĕнтереççĕ. Хăмла плантацийĕсем 20 гектара сарăлнă.



А.Фадеев фермерăн çĕнĕ ĕне вити.

– Çитĕнекен ăру – пирĕн пуласлăх. Çавăнпа та вырăнти Кӳстӳмĕр шкулĕпе тачă çыхăнура территори пайĕ. Пирĕн тăрăхра маттур ачасем ӳсеççĕ. Учительсем пулăшнипе вĕсем тĕрлĕ конкурс-ăмăртусенче мала тухаççĕ. Анчахрах, акă, Муркаш округĕнче сывлăш çĕленĕсен ăмăртăвĕнче, ку эрнере хĕрсем футбол вăййинче çĕнтерӳçĕсен йышне кĕчĕç. Вĕсемпе савăнатпăр, – кăмăллăн пĕлтерчĕ Эрколий Анатольевич Молчанов.

Ершепуç – аталаннă тăрăх. Кунта ĕçчен те маттур, ялшăн çунакан çынсем пурăнаççĕ. Юлашки вăхăтра ялсенче ырă улшăнусем пулни куç умĕнче. Малашлăхра пурнăçа кĕртмелли ĕçсем те чылай.

**Оксана СЕМЕНОВА**